*В.В. Никифорова*

# Хальхи литература идеи-идеалӗ: 2001–2005 ҫулсенчи проза

Ҫӗнӗ ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи литература процесне ятарласа тишкернӗ ӗҫсем хальлӗхе курӑнмарӗҫ. Кунашкал тишкерӳсем кирлех: вӗсем литература аталанӑвне, уйрӑм произведени контекстне курма май параҫҫӗ. Ҫыраканӗ пирӗн нумайлансах пырать, вулаканшӑн вара мӗнле кӗнеке суйласа илесси паян ҫӑмӑлах мар. Тата пур кӗнеке те (уйрӑмах авторӗ хӑй укҫипе кӑларнӑ пулсан) библиотекӑсене, вулакан патне ҫитмест. Хальлӗхе тарӑн пӗтӗмлетӳсем тума, уйрӑм туртӑмсем, пысӑк ҫитӗнӳсем пирки калаҫма иртерех — пӗтӗмпех вӑхӑт тӗрӗслевӗ витӗр тухмалла. Малтанхи утӑм вӑл — пӗтӗмӗшле тишкерӳ. Ку статьян тӗллевӗ — XXI ӗм. малтанхи пилӗк ҫулӗнче пичетленнӗ **прозӑна** тишкересси.

Литературӑн, сӑмахӑн витӗмӗ пурах. Н. Ишентейӗн «Ҫуралман ача сасси» поэмине вуласан ҫамрӑксем хӑйсен шухӑшне улӑштарнӑ пирки темиҫе тӗслӗх те илтнӗ. Юлашки ҫулсенчи литературӑна сӑнаса пынӑ май ҫакӑ курӑнать: ҫамрӑксемшӗн (уйрӑмах прозӑра) ырӑ тӗслӗх ҫукпа пӗрех. «Идеал» сӑмах паянхи кун кӑнттамрах та илтӗнет пулмалла[1]. Анахронизм тейӗ тепри. Ҫамрӑксемпе ӗҫлекенсем унӑн пӗлтерӗшне те, кирлӗлӗхне те ӑнланаҫҫӗ. Вӗренӳ заведенийӗсен чиккинчен тухсан аса илсех каймаҫҫӗ ӑна. Вулакана вара, уйрӑмах ачана, ҫамрӑк вулакана ырӑ тӗслӗх кирлех[2]. Унсӑрӑн усалли хӑй енне ҫавӑрать. Тӑтӑшах ҫаратни-вӗлерни, ҫакӑнни-перӗннине кӑтартса парсан, вулакан-куракан ӑнӗнче ирӗксӗрех хӑй евӗрлӗ тыткаларӑш моделӗ йӗркеленет. Паллах, сӑлтавӗсем татах та пур. Анчах та аслисемпе хирӗҫнишӗн, экзамен парайманнишӗн, вӗренме кӗрейменнишӗн пурнӑҫран уйрӑлакан ҫамрӑксем, шел пулин те, паянхи кун та сахал мар...

«Идеологи», унпа пӗрлех «идея», «идеал» сӑмахсем пурте пӗлекен

сăлтавсене пула юлашки çулсенче хисепрен тухрĕç. Е, кăшт урăхларах каласан, пĕр хушă пач хисепрен кăларса пăрахса юлашки çулсенче вĕсем пуррине аса илме пуçларăмăр. Çапах та, 1990-мĕш çулсенчен пуçласа лару-тăру питех улшăнман темелле[3]. Уйрăмшар тем тĕрлĕ ирĕклĕ пурăнсан та çынсене пĕрлештерекенни пулмаллах-мĕн. Пĕчĕк ушкăна та, пысăк ушкăна та пĕр чăмăра пуçтарма вара вăй кирлĕ. Тĕп шухăш çинче никĕсленет пулĕ çав вăй. «Чăваш ячĕпе пурте пĕр пулар!» — текен шухăшсем ахальтен çуралмаççĕ. Паянхи кун эпир пурне те çывăхлатакан шухăшсемшĕн тунсăхламарăмăр-ши? Мĕне те пулин ĕненекен çын вилĕме те куçран пăхма хăрамасть. Амбразура çине идейăшăн выртаççĕ, укçашăн мар, тенĕччĕ пĕр телекăларăмра.

Литература пĕлĕвĕнчи «идея» ăнлавăн пĕлтерĕшĕ ансат: вăл хайлавăн тĕп шухăшĕ, пысăк шухăшĕ. Автор хăйĕн произведенийĕпе чунра-ăсра пуррине тĕнчене пĕлтересшĕн. Апла пулсан, кирек епле хайлавра та шухăшсем пур (пулмалла!), вăл шутра вара — тĕп шухăш. «Идеал» ăнлава çывăх герой, тӳрех калар та, çак тапхăрти прозăра курăнмасть. Мĕнлерех геройсем сăнарланаççĕ-ха паянхи хайлавсенче? Пурнăçăн хăш пулăмĕсем ытларах ыраттараççĕ çыравçăн чунне? Çакăн евĕрлĕрех ыйтусем çинче чарăнса тăрă-пăр ку статьяра. Пĕр тĕслĕх илер-ха.

Самани те кунран кун хăрушланса пырать. Çын кушак вырăнĕнче те мар. Шăнана вĕлернĕ пек вĕлереççĕ.

— Килтен тухса кайса çухалнисем мĕн чуль тата.

— Вĕлернĕ ĕнтĕ вĕсене.

— Ашшĕ ывăлне, амăшĕ ачине тĕплет. Ачисем те ашшĕ-амăшне вĕлереççĕ. Эх, самана пулса кайрĕ.

— Самана мар, хамăр айăплă. Пурăнма пĕлместпĕр. Эрех пăсать çынна. Ура çын çапла хăтланас çук.

(У. Эльменĕн «Аня... Анечка... Анна» калавĕ)[4]

Ĕçке пула нумай çын пĕтет ку кĕнекере. Анчах ĕçкĕ кăна айăплă мар пулĕ-ха пĕтĕм пурнăç тискерĕшĕн. Тӳнтерĕ-тискерĕ вара кашни хайлавра чĕрене ярса илет. Марина («Аня... Анечка... Анна»), Нина («Саншăн чунăм та шел мар»), Наташăпа пĕчĕк ывăлĕ («Хăрнă вĕрене») вилеççĕ, Олеся хăйĕн хĕрне укçалла сутать («Аня... Анечка... Анна»). Çавнашкал хăрушă чăнлăхсем пурнăçра пурришĕн авторăн хăйĕн чунĕ те питĕ ыратать. Тен, çавăнпа вăл вулакана хăвăртрах çак пурнăçăн пĕтĕм тискерĕ-тӳнтерĕ пирки каласа парасшăн. Васканипе-ши, фактографи формине хывăнать час-часах çак ăнтăлу. Пурнăç саманчĕсене нумай чухне тӳрремĕн ӳкерсе илнипе çырлахать çыравçă. Вĕсене ăнланса илме те, ăнлантарса пама та тĕллев лартман пулмалла. Нумай вилĕм вара ыйту çуратать — мĕншĕн? Мĕншĕн Аня йăмăкĕ Марина вилет — пурнăç тискерлĕхне пула-и? Е Нина (икĕ ача амăшĕ!) мĕншĕн çăмăллăнах вилĕме хирĕç утать? Наташа пĕчĕк ывăлне вĕлернине те сăл-тавласа çитермен. Сăнарсен çиелти паллисем çинче ытларах чарăнса тăрать çыравçă, шала кĕрсе тĕпчемест. Паллах, çиелти паллăсем урлă та герой утăмне сăлтавлама пулать-ха.

Улькка Эльменĕн пĕрремĕш кĕнекинче геройсемпе калуçă хуçаланать. Геройсем хăйсен ирĕкĕпе «пурăнмаççĕ». Çыравçăн иккĕмĕш кĕнекинче ӳсĕм пурри куçкĕрет[5]. Унта та — паянхи çынсен пурнăçĕ-хутшăнăвĕ, шăпи-телейĕ... Сăнарсем вара — ирĕклĕрех, хăй тĕллĕнрех, тарăнрах. Уйрăмах тĕп герой, Ирина, сăнарĕ асра юлать.

Хĕрарăм сăнарĕ тенĕрен, ытла вăйсăрланса каймарĕ-ши вăл пирĕн 1990-мĕш çулсенчен пуçласа? Ĕçкĕпе иртĕхекен, çемье пурнăçне аркатакан, ачи-пăчине пăрахса каякан, хăй çине алă хуракан... хĕрарăм тăтăшах сăнарланать çак тапхăрта. Ачасем — телейсĕр шăпаллă, ялта та, хулара та — юхăннă кил-çурт, арканнă хут-шăнусем... Пурнăçĕ, пурте пĕлетпĕр, ансатах килмерĕ ĕмĕрсен чиккинче. Хăçан та пулин çăмăл пулнă-ши вăл? Çăмăл пулнă-ши Укахви (Ю. Скворцовăн «Уках хурăнĕ» повеçĕ) е Саламби (А. Артемьевăн «Саламби» повеçĕ) вăхăтĕнче? Çук пулĕ. Анчах та вĕсем пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерсе пире Пурнăçпа таса Юрату илемне, мăнаçлăхне ăнланса илме пулăшаççĕ. Паянхи кун та çак ретри (вăйлă) сăнарсем пурах. Унсăрăн тĕнче пирĕн тахçанах арканнă

пулĕччĕ. Çавнашкал сăнарсене курмасăр эпир пурнăçăн хăрах енне анчах ӳкеретпĕр мар-и? Унтан та ытларах, XX ĕм. вĕçĕнче хĕрарăм нихçанхинчен вăйлăрах пулса тăчĕ. Пур хутлăхра та, вăл шутра влаç тытăмĕнче те, вăл хăйне валли вырăн çĕнсе илчĕ. Сăлтавĕ-тĕллевĕ кашнин тĕрлĕрен пулсан та, арканса кайма тăракан тĕнчене шăпах хĕрарăм çураçтарма вăй-хăват, мехел çитерет пулмалла. Паянхи кун вăйлă хĕрарăм вăйсăрринчен чылай ытларах пулнăн туйăнать. Нумай япалашăн хăй çине яваплăх илме тиврĕ унăн[6]. Хальлĕхе çак герой илемлĕ литературăра сăнарланаймарĕ тесен те йăнăш мар.

Пĕтĕмĕшле илсен, пархатарлă герой текеннишĕн вулакан та, çыравçă хăй те юлашки çулсенче тунсăхласа çитрĕ курăнать[7]. Литературăра тăтăшах идеал сăнарланмасан та, тĕслĕх пулмалли геройсем кирлине (уйрăмах çамрăксемшĕн) çӳлерех асăннăччĕ. Хальлĕхе вара кĕске те çăмăлрах сукмакпа васкатпăр пулмалла вулакан патне... Ку вара чылай чухне пуриншĕн те сиенлĕ.

«1990—2000 çулсенчи литературăра усал сăнĕ пысăккăн курăнса кайрĕ», — тенĕччĕ Г. Федоров[8]. Çак тенденци 2000 ç. хыççăн та палăрать-ха. Вăрă-хурахла тискер хăтланни, тепĕр çынна ним вырăнне те хуманни, ун пурнăçĕ çине алă çĕклени... Ку пĕтĕмпех чăн пурнăçпа çыхăннă тейĕпĕр. Чылай чухне, шел пулин те, çак чăн пурнăçăн копийĕ пек пулса тухаççĕ писательсен хайлавĕсем те. Йăлт пушатса хăвараççĕ вĕсем вулакан чунне. Танлаштарма темшĕн А.П. Чеховăн «Спать хочется» калавĕ (1888) чи малтанах аса килет. Пĕчĕк ачана пăхакан хĕрача (хăй те ача!), ывăнса çитнĕскер, ыйхă тĕлĕшĕпе çав пепкене вĕлерет. Хăрушă... Анчах та ку калав тĕрлĕ **туйăм çуратать**. Икĕ ачине те хĕрхеннипе пĕрлех аслисене тарăхни... Çакăнта-и, тен, **илемлĕ** произведенин вăрттăн-лăхĕсенчен пĕри? **Илем** çукки/сахалли вара пушатса хăварать.

Чехов хăйĕн калавне XIX ĕм. вĕçĕнче çырнă. 4—5 страницăллă калавра ачана вĕлернĕ самант — пĕртен-пĕр пĕчĕк абзац. Тата хăвăрт-хăвăрт каласа кайнă ку хăрушă ĕç пирки:

Смеясь, подмигивая и грозя зеленому пятну пальцами, Варька

подкрадывается к колыбели и наклоняется к ребенку. Задушив его, она быстро ложится на пол, смеется от радости, что ей можно спать, и через минуту спит уже крепко как мертвая...[9]

Ытти пĕтĕмпех — çак утăм патне илсе тухнине ăнлантарни. Варя, 13 çулхи хĕрача, атăçă килĕнче пĕчĕккине пăхать. Ача пăхнисĕр пуçне кун каçа темĕн тĕрлĕ ĕç тутараççĕ ăна усал хуçасем. Хыпăнса ĕçлет Варя. Чупса ĕçлесен çывăрас килни иртсе кайнă пек туйăнать ăна. Пĕртен-пĕр ĕмĕчĕ вара унăн — çывăрса тăранасси. Пуринчен йывăрри Варьăшăн — сĕтел умĕнче тăрса çĕрулми шуратасси... Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, тĕрлĕ енчен сăлтавлать Чехов хĕрача йăнăш утăм тунине. Хĕрачана пачах та айăплаттарасшăн мар тейĕн. Чăн та, пĕчĕк ача вилнине пĕлмен пулсан айăплав пирки шухăш та çуралман пулĕччĕ.

Паянхи кун вара хамăр литературăра эпир час-часах хирĕçле картина куратпăр. Калав тăршшĕпе хăрушă ĕç пирки çырса кăтартнă, ăна сăлтавлани вара — пĕр абзац е пĕр предложени çеç... Паллах, Чехов XIX ĕмĕр вĕçĕнче ĕçленĕ. Анчах та «натурализм», «натура шкулĕ» ăнлавсене вырăс литературинче шăпах XIX ĕм. 40—50-мĕш çулĕсенче асăнма тытăнаççĕ[10]. Чеховăн пĕтĕм пултарулăхне илес пулсан та, «çара» натурализм çук унăн. Паллах, кашни çыраканăн, пĕтĕмĕшле наци литературин хăйĕн пултарулăх стилĕ. Анчах та чăн-чăн çыравçăн Илем хутлăхĕнчен тухса кайма ирĕк çук. Унсăрăн хайлав илемлĕ литература тĕслĕхĕ пулмасть. Уçса пăхар-ха журналсене. Акă Владимир Левуковăн «Пурнăç кукри» калавĕ (Ялав. 2004. 7—8 №). Микуль арăмне, Наçтука, епле нушалантарни — çур калав ытла.

Унччен те пулмарĕ, хăлхи урлă пăчкă чăкăрт тунине туйса илчĕ Наçтук. Пичĕ тăрăх вĕри юн шăпăртатса юхса анчĕ... (90 с.)

Хĕнени, нӳхрепе ярса пуртă-пăчкăпа асаплантарни. Мĕне кирлĕ ку? Вĕçĕнче ыйтусем лартма-и? Тĕпре чăн пулнă уголовлă ĕç пулсан та, ун пирки

писателĕн илемлĕх мелĕсемпе çырса кăтартмалла пек-çке. Кунта вара пĕр сăнарлăх та, илемлĕх мелĕ те çук. Вулакан ăсĕ-чунĕ валли мĕн пур кунта? Йӑлт пушатса кайни кăна.

«Чăн пурнăçăн копийĕсем» тесен, тен, тĕрĕсех те пулмĕ. Сăмах ирĕклĕхне «алла илсен» массăллă информаци хатĕрĕсем хăйсене ытла ирĕклĕ туйса илчĕç. Вулакан-куракана илĕртес тесе каçма юраман чикĕсене пысăк хăвăртлăхпа аркатса каçса кайрĕç. Хаçат-журнал, уйрăмах телевидени еплерех çаратнине, вĕлернине, савăшнине тĕплĕн кăтартма пуçларĕç (пĕр хушă ачасене хамăр мульт-фильмсене, аслисене хамăр киносене те кăтартма пăрахнăччĕ). Çакнашкал хура чăнлăх (хура реализм) та пулнă паллах. Анчах та кирек епле йывăр вăхăтра та хурапа юнашар шурри те пулать: таса туйăмсем, ырă кăмăллăх т.ыт.те. (Çак çутă тĕссем çине пусăмлама вăхăт çитмерĕ-ши паян?) Аслăраххисен чунĕ те пурин те çакнашкал вараланчăка пĕр вĕçĕмсĕр чăтаймасть. Çирĕпленмен çамрăк чунсем пирки мĕн калăн! Çакнашкал хирĕçле идеалсемпе «хавхаланса» пĕр ăру çуралса пурнăç çулĕ çине тăчĕ... (Д. Гордеевăн «Çич çунатлă курак» повеçĕнчи пĕчĕк Юрккан пурнăçĕ «укçа — чи кирли, укçаллă çынсем — чи вăйлисем» текен шухăша ĕненнине пула синкерлĕ вĕçленет. Апла, тĕрĕс мар идеал суйласа илни хăрушă инкек патне те илсе çитерме пултарать!) Çамрăксем хушшинчи преступленисем нумайланнинчен паян тĕлĕнме кирлех-ши?

Тата шаларах кĕрсе кайиччен пĕтĕмлетер. Хура чăнлăх вăл — пурнăçăн пĕр енĕ çеç (кирек хăш вăхăтра та!). Ăна анчах пĕр вĕçĕм ӳкерсе эпир чăн пурнăçа тĕрĕс кăтартма пултараймастпăр, апла пулсан пирĕн ку искусствăллă чăнлăх пулса тăрать. Çакнашкал çулпа каякан литература, кино, апла тăк — чĕрĕ мар, искусствăллă пулăм. Çапах та çын пурнăçне вăл пысăк витĕм кӳме пултарать. Пĕр тĕслĕх çеç илсе паратпăр:

> Бразилин нумайăшĕ юратакан сериалĕсене пула çак çĕршывра мăшăрсем уйрăласси ӳснĕ, ача çураласси чакнă. Нумаях пулмасть ăсчахсен ушкăнĕ ирттернĕ тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, романтика сериалĕсем

Бразили çыннисен пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсен хăнăхăвĕсене витĕм кӳреççĕ. Сериалсенчи сăнарсен ыттисемпе танлаштарсан ача сахалрах, ялан тенĕ пек вĕсем е пĕччен, е уйрăлнă. Ăсчахсем шутланă тăрăх, сериалсем Бразилие 3 миллион ачасăр хăварнă, 800 пин çемьене аркатнă.

(Хыпар. 2009. Çу, 16. 92—93 №)

Чехова аса илнĕччĕ маларах. Унăн пултарулăхĕпе танлаштаруллăн Галина Цветкова çырнă «Çӳппи» калава пăхма сăлтавсем пур пек (Тăван Атăл, 2004. 5 №). Кĕске те витĕмлĕ пурнăç ӳкерчĕкĕ хайланă автор. Телейсĕр шăпа пĕр сăнара — Çӳппие — çуралсанах сыхласа тăнă-тăр. Ячĕ те унăн «çӳп пек таса мар» (41 с.) пулнине пĕлтермест пулсан та пурăннăçемĕн çак паллăна çаврăнать. Таса ачана çӳп çине пăрахса илни унăн пĕтĕм пурнăçне малтанах вараласа хуниех тейĕн. Чăн та, вилĕмĕ тупайман ăна, анчах шăпи ытла синкерлĕ пулса тухнă. Аслă Шăпана хирĕç тăма вăй-хăват çитерейместь Çӳппи.

«Халĕ вара сăрă шĕветнĕ чух тĕксĕм тĕслисене шеллесе тăмаççĕ. Пирĕн пурнăçра ача-пăчапа ватă-вĕтĕ чи хӳтлĕхсĕрри пулнăшăн социаллă йĕркесене айăплама именсе тăми пулчĕç пирĕн писательсем те. Галина Цветковăн «Çӳппи» калавĕнчи хĕрача шăпи паянхи пурнăçшăн уйрăмах типлă пулĕ тетĕп»,– шухăшлать Денис Гордеев[11] «Тĕксĕм тĕслисене шеллесе тăманнисен» шутне ку автора кĕртме тăхтăпăр. Илемлĕ произведени картинчен тухса документлă хайлав чиккине кĕрсе каймасть Цветкова. Паллах, Çӳппи хăйĕн хĕрне Анюка вĕлерекен эпизод хăрушă (43 с.). Анчах вăл та чуна **пушатса хăвармасть**, тĕрлĕ **туйăм çуратать.** Тата ку калавăн тĕп тĕллевĕ — социаллă йĕркесене айăпласси-ши? Темĕн. «Çапла шăпа та пулнă/пулать» тесе каласшăнтăр автор.

Калаври тĕп мотив — Тарух карчăка аса илни героиня пурнăçĕ улшăннине палăртать.

Таруха мĕн, вилнĕ çыннăн вут хутса ăшăнас хуйхи çук, — сасăпах

> уласа ячĕ Çӳппи. — Пăрахса хăва-а-арчĕ мана, пĕчченех пăрахса хăварчĕ (40 с.); Таруха мĕн, леш тĕнчере сутуçсем çуккă... (41 с.); И-и-и! Турă пăрахман иккен мана. Турă пур иккен. Шалккă, Тарух кураймарĕ çак ырлăха (44 с.); Эх, Тарух, Тарух, — пăшăлтатрĕ яланхи йăлапа Çӳппи, çулталăк маларах ӳпке чирĕпе вăхăтсăр çĕре кĕнĕ тусне аса илсе. — Ырă курса пурăнас чухне ма васкарăн-ши лутра яла? (44 с.)

Пурнăçĕ улшăнать те хĕрарăмăн, кăмăл-туйăмĕ те улшăнать. Хĕлхем çути ун умне ӳкнĕ тейĕн. Çӳппие улталанă Петĕр, Анюкăн ашшĕ, хăй йăнăшне ăнланса илет. Шăпи ăна явап тыттарнă ĕнтĕ — унăн кермен пек çуртĕнче нихăçан та ача сасси илтĕнмен. Хăв тунă ĕçсемшĕн пурпĕр явап тытмаллине **кăтартса** парать калав, çавăн çинчен асăрхаттарать те.

Денис Гордеева «самана çыравçи» теессĕм килет. Обществăра, çынсем йĕри-таврa мĕнле улшăну пулса иртет — Д. Гордеев сисĕмлĕ асăрхать, проза жанрĕн пур тĕсĕпе те усă курать. Пĕтĕмĕшле картина, лару-тăрăва кăтартса парасси пĕлтерĕшлĕ пулмалла çыравçăшăн. XX ĕм. вĕçĕнче çĕршыври улшăнусем, рынок экономики, самана пăсташĕсем, пĕлетпĕр, нумай çын шăпине пач шухăшламан йĕрпе чуптарчĕç. Çакăн пирки ĕнтĕ Гордеевăн «Пăсташ» романĕ (Шупашкар, 2005). Самана улшăнăвĕсене хăвăрт палăртса-ӳкерсе пыма публицистика стилĕ меллĕрех. Кунашкал стильре характерсене тарăн тĕпчесе тăма май çук (паллах, унăн тĕллевĕ те урăхла).

Гордеевăн тепĕр повеçĕ — «Хуп хушшинчи çылăх». Кирек мĕнле хайлавăн та ятне тупма çăмăл мар. Ку повесть ячĕ пур енчен те ăнăçлă. Тĕп мотива та палăртать вăл, символ шайĕнче те вуланать, философиллĕ пĕтĕмлетӳсен пуçламăшĕ пулса тăрать: «Çылăха ăна хуп хушшинче пытарса усраймастăн. Çын курмасан та, Турă курать...»[12]

«Куççăр çĕрулми» романăн тĕп геройĕн, Миххалăн, малтанхи юратăвĕ Кретхи хăй çине хăй алă хурать. Арăмĕ те, Марье, вилнĕ хыççăн арçын «чун пушанса юлнине», «пурăнас хавасĕ те, чун хавалĕ те хухнăçемĕн

хухнине»[13] туйса илет (с. 354). Хӑй килӗнче вӑл пуриншӗн те ытлашши пулса тӑрать. Унӑн пурнӑҫӗн ӗҫне (куҫсӑр ҫӗрулмине) ним вырӑнне хумасӑр кӑларса переҫҫӗ ӗмӗтсӗр хӗрарӑмсем... Ҫаксем пуль-ха Миххала сарӑмсӑр вилӗм патне илсе ҫитерекен сӑлтавсем. Ҫапах та чун асапӗн тарӑнӑшӗ вулакан умне тухсах ҫитеймест — унӑн ытларах ҫиелти паллӑсене ӗненме тивет. Миххал вилӗмӗ сӑлтавланса ҫитейменни пирки шухӑш ҫуралать. Авторӗ ӑна «ман ирӗкпе вилмен» тет-ха[14] Кӑна ӗненме пулать. Анчах та ҫыравҫӑн ӑсталӑхӗ мӗн чул ытларах, ҫавӑн чул нумайрах ыйтатпӑр-ҫке.

Сталин саманин синкерӗ «Аххаяс-маххаяс» повеҫри Силиссана иккӗрех тӑлӑха хӑварнӑ (Ялав. 2003. 7 №). Сталин сӑнарӗн вӑйӑмӗ, ун ӗҫӗсен ахрӑмӗ паян пурӑнакан ҫынсен шӑписене те улӑштарать (Геннадий Максимовӑн «Сталин грамоти», «Шур пир ҫинчи мӗлке» хайлавӗсем).

Самана таппине ҫывӑх туякан тепӗр ҫыравҫӑ — Сергей Павлов. Ку ҫулсенче унӑн «Сӗлкӗш» романӗ пичетленчӗ[15]. Хайлав ячӗ — символла сӑнар, тен, ытларах та. Ӑнӑҫлӑ ят. Пӗтӗм произведение витерсе тӑрать вӑл. Тӑпрана тытса тӑракан йывӑҫ пек. Вулли-турат-ти те, ҫулҫи те пур, тымарӗ те. Ку пӗлтерӗш тӗрлӗ формӑна хывӑнать-туратланать. «Пурнӑҫ пач сӗлкӗшленсе кайрӗ вӗт. Раҫҫей никӗсӗ паян — чӑн-чӑн сӗлкӗш» (286 с.), — тет Юрий Матвеев. Ӑна Михаил Амосов тӳрлетет: «Ман шутпа, ҫӗршыв никӗсӗ — халӑх чунӗ. Халӑх чунӗ вара тӗппипех сӗлкӗшленнӗ-ши? Ҫук, шуйттана пурте сутӑнса пӗтмен-ха» (288 с.).

Лару-тӑру кӑсӑклӑ. Тыт та танлаштар чӑн пурнӑҫпа. Пулнӑ-и, пулман-и? Ҫыннисем ҫаксем мар-ши? Чи кӑсӑкли вара — тӗп сӑнар. Кӑткӑсси темӗпӗр — чун тарӑнӑшне кӗртсе кӑтартмасть пире автор, ҫиелти паллӑсем, тулаш ӗҫ-пуҫ ҫинче ытларах чарӑнса тӑрать. Туртакан ҫине тиеҫҫӗ тенешкел, тиенӗ те тиенӗ мӗскӗн Лисук ҫине. Чӗмсӗр, чӗлхесӗр янавар пек туртать вӑл хӑйӗн лавне. Ласӑрсем пулӑшасса кӗтсе. Ласӑрӗ тата, асамҫӑ пекех, хӗр инкеке лекмессерен ун ҫулӗ ҫине тухса тӑрать. Чӑн та, вӗҫӗнче ҫирӗпленет-ха Лисук, хирӗҫ те калаҫма пуҫлать. Анчах та ку ытларах тулаш енчен сӑлтавланать. «Мӗнех, ҫирӗп-ха эпӗ. Хытса пыратӑп. Чунӑм уласа макӑрнӑ самантра та ахӑлтатса

кулмашкăн хевте çитеретĕп» (272 с.) — тенипе çеç. Ларисăпа ашшĕ сарăмсăр вилсен те хăвăрт «чĕрĕлет» Лисук. Çур сехет Турă кĕнекине уçкаланă хыççăн вăйланать.

> Темиçе йĕрке вулать те малалла уçать, тепĕр хут вăхăтлăха шухăша кайса чарăнса тăрать те каллех малалла уçать. Юлашкинчен кĕнекене пач хупрĕ те икĕ аллипе кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ. «Чим, çакăнта мар-ши пĕтĕм хурав?» — терĕç унăн куçĕсем (360 с.) <...> Айăккинчен пăхсан Лисук пуçне мăнаçлăн каçăртса çĕнĕрен вĕçеве хатĕрленекен шурă кăвакарчăн пекех курăнчĕ (Çавăнтах).

Сăнарăн асап-хуйхине **кăтартса** памасть автор, **каласа** парать ун пирки. Вăл ĕçпе пусăрăнни çинчен, юратнă çыннинче тĕрек тупни пирки. Кунта, туйса тăратпăр, вулакан ыйту паратех (тĕлĕнсе, тарăхса, хĕрхенсе) — мĕншĕн вилеççĕ айăпсăр Ларисăпа унăн кукашшĕ? Кукашшĕ — уйрăм калаçу тейĕпĕр. Лариса вара, шкул çулне те çитмен хĕр пĕрчи, ахаль те ашшĕ-амăшĕсĕр юлса хурлăх çителĕклех курнăскер?.. Вулакан юратнă геройсем вилнипе килĕшесшĕн маррине пĕлетпĕр, анчах хальхинче ку ыйту тĕпчевçĕсем умне те сиксе тухать. Хайлав поэтикинчи пĕлтерĕшĕ мĕнле-ши вара тетĕн. Вилĕмĕ ахаль те туллиехчĕ-ха — халĕ вара савăчĕ тăкăнсах каять. Пĕчĕк Лариса вилни обществăн малашлăхне кур-манни мар-ши? Лисук ашшĕ те тӳрленсе çитме пуçланăччĕ. Хайлавра йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнакан геройсем те пулмалла пек-çке. Йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентмелле мар-и илемлĕ произведенин?

Амăшĕ вил тăпри çине каçарупа пил ыйтма каякан Лисук хреснашшĕне курнипех кăмăлĕ-ăнтăлăвĕ иксĕлни те ĕненмеллех мар (371 с.). Хĕрарăм чунĕ чылай тарăнрах тесе аса илтерес килет кун пек чух арçын çыравçăсене. Тата çавăн чухлĕ инкек-синкек витĕр тухса Турă кĕнекине ăша илме тăрăшакан Лисук халĕ те çывăх çыннисене каçарма хал çитерейместь-ши? Пурнăç опычĕ чылай пухăннă хыççăн та Лисук тавралăха хура е шурă тĕслĕ анчах курни те

иккĕлентерет (373 с.).

Турпас пек вĕçет Лисук пурнăç тăрăх. Шухăшласа тăма вăхăт çук унăн — иккĕмĕш хут паспортне пăрахса хăварса тарать. Хăй тĕллĕнлĕх çук пулсан герой мĕне те пулин вĕрентет-ши? Пулĕ те, çавăн пек тумалла мар тесе.

Ял ĕçке ерни, çавна пулах чылай çын пурнăçран уйрăлни, чăн та, пулчĕ XX ĕм. вĕçĕнче. Анчах çулталăк хушши хулара пурăнса Лисук тĕлĕнмелле пĕтĕмлетӳ тăвать: «Тискерлĕхĕпе, пӳт-сĕрлĕхĕпе, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхессипе **хула ялтан юлмасть иккен**» (палăртни пирĕн. — *В.Н.*) (170 с.). Ялĕ хула хыççăн кайманччĕ-и? Кирек епле пулсан та, хура сăрăсем роман талккăшне пач хупласа хума пуçлани куçкĕретех. Мĕншĕн апла тунине прозаик хăйех ăнлантарать-ха: «Хамăр та, çыравçăсем, хаçатсене шăпах çавăн пек киревсĕрлĕхпе путсĕрлĕх хыпарĕсемпе тултаратпăр — вулакана илĕртетпĕр-çке» (288 с.). Лисук (йывăр çын!) вилĕмне вара пуш-шех ăнланма йывăр. Ăнсăртлăх хуçаланать романра. Тен, ку хайлава пирĕн авантюрлă жанр виçисемпе хакламалла? Çакнашкал жанр системинче ăна тĕрĕсрех хак пама та пулать пулĕ. Авантюрлă жанр япăх тесе каласшăн мар эпир. Анчах та паянхи кун тап-таса авантюрлă произведени çурални искусствăллă пулăм мар-ши? Пулмасла халап пек курăнакан-илтĕнекенскер. Кун пирки, тен, уйрăм шухăшламалла? Хăш-пĕр жанр пур вăхăтра та аталанайманни паллă.

Лисук вилĕмĕ ăнланмаллах мар терĕмĕр. Автор пĕр детальпе те хăрушлăх çывхарасса систермест. Произведени вĕçĕнче пăшал сасси илтĕнессе маларах систерсе хураканччĕ. Пăшал стена çинче çакăнса тăнине кăтартса. Литература улшăнса пырсан та — вилĕмпе асăрханулларах пуласчĕ. Чăн та, Лисукăн тăванĕсемпе курса калаçас кăмăл çуралать, «темшĕн ăш вăркать» (409 с.). Çапах та йывăр çын психологийĕпе çыхăнтармалла пулĕ кусене чи малтанах: хĕра-рăма ĕмĕрлĕх сасси вăйлăрах илтĕнет ун чух... Пĕчĕк хĕрĕ юлать-ха Лисукăн. Апла пулсан, пĕчĕк те черченкĕ шанчăк çути пур пирĕн умра. Произведение хура сăрсемпе, инкекпе е вилĕмпе, вĕçлени час-часах тĕл пулать ку тапхăрта. Чылай чух кунашкал финал хайлав логикинчен йĕркеленмест. Паянхи кун ырă сăнара анчах мар, шанчăк кӳрекен финала та çураçтарасшăн пулмалла.

«Тан таппи» романра та (пĕр ярăма кĕреççĕ, 2004—2005)[16]. «Сĕлкĕш» романри геройсем мĕлтлетсе илеççĕ (Лисукпа ашшĕ-амăшĕ, Ласăр, Юрий Михайлович Матвеев). Кунта вĕсем иккĕмĕшле геройсем. Сăмах вара ытларах 1990-мĕш çулсенчи ял пурнăçĕ пирки пырать, колхозсем уйрăлса-арканса кайнă тапхăр çинчен. Çакна уйрăммăн асăнса хăварас килет: ку романра та сарăмсăр вилесем пур. Фермăра ĕçлекен Маринен касса ваклантă виллине тупаççĕ. Ун хыççăнах ферма пуçлăхĕ, Юрий Петрович Платов, çакăнса вилет. Вăрттăнлăхне вĕсем пĕрле илсе кайнă пулсан та, вĕсен шăпи пирки автор систерет-ха. Павăл Урнов вилĕмĕ вара çирĕп сăлтавланайман. Çул çинче пĕр арçынна лартать те вăл, лешĕ шăрпăк чĕртнипе Урнов машини сирпĕнет. Урнов ертсе пынă çулăн пуласлăхĕ çук тесшĕн пулнă пулĕ автор.

Хăйсене хăйсем вĕлерекен геройсем те тăтăшах ÿкерĕнеççĕ терĕмĕр паянхи прозăра. Проблемăна уçса паракан чи илемлĕ тĕслĕхсем («илемлĕ» тени кун пек чух вырăнлах мар-ха та) шутĕнче Хветĕр Агиверĕн «Чăпар лĕпĕш» калавне куратпăр. Çак калава вулама пуçласанах тĕп герой, Виталий, пурнăçĕ вĕçне çитнине туйса илетĕн (Тăван Атăл. 2005. 6 №).

> Тĕлĕнмелле, пасара мар, масара килĕштерет ун чунĕ (36 с.). Хальхинче те кунта пулса чунне канăçлăх кĕртрĕ вăл. Пурăнма тĕрек туянчĕ (37 с.).
>
> Анчах нумайлăха мар, иккен.
>
> Уйăхсерен темиçе виле кĕрет çăвана. Ытларах яш-кĕрĕм вилет эрехнаркăмăш ĕçсе. Ваттисем ватăлла — тÿ-сĕмлĕ, шăтти-патти хăтланмаççĕ (36 с.).

Тепĕр темиçе уйăхран Виталий арăмĕ Тоня та, Виталий те хăйсен ирĕкĕпе çакăнта килсе выртаççĕ. Юратусăр пурăнса ывăннăран. Шăпа çырнă иккен вĕсене çавнашкал вилме. Юмăç Хреççи карчăк ун пирки тахçанах систернĕччĕ... Халĕ юмăç хăй те масар çинче выртать. Виталий масар çинче чух юмăçĕ тепре аса илтерчĕ тейĕн...

Чăпар лĕпĕш юмăç вил тăприйĕн юпи çинчен вĕçсе хăпарчĕ те Виталий хулпуççийĕ çине вĕçсе анчĕ. Чĕрех. Ĕнтĕркемен. Хреççи чунĕ марши? (37 с.)

Чăпар лĕпĕш — вилнисемпе чĕррисене çыхăнтаракан сăнар. Вăл малтанах **систерсе** хурать геройсен шăпи синкерлĕ вĕçленессе. Вăл çаврăм туса вĕçсе килет те — çыннăн çĕр çинчи пурнăç çаврăмĕ вĕçленет. Мĕн тесен те, Агивер событисене лайăх, пĕлсе сăлтавланă. Вулакана та лайăх хатĕрленĕ (вилĕмпе тĕл пулма хатĕр тăма пулать-ши ĕнтĕ?). Виталий чунĕнче çил-тăвăл алхаснине те туятпăр эпир, чăтăмлăх пĕви кĕçех татăлса каяссине те... Çил-тăвăлне ниçта та çиеле кăлараймасть арçын. Хĕрĕ умĕнче яваплăх туять-и тен. Пĕр вырăнта çеç чун канăçне тупать вăл — масар çинче. Шăпи çавнашкал йĕркеленнĕшĕн никама та айăплама сăлтав çук пек — «хăй мĕн тунине ĕненсе пуçхĕрлĕ пусса чăмакан» (41 с.). Виталие те, чĕри айĕнче ача йăтса çӳрекен Тоньăна ĕçме пăрахайманшăн та, хĕрарăм пурнăçĕ пӳкле вĕçленнĕшĕн те... Çапах та! Литературăна чăн пурнăçăн тĕкĕрĕ тесе йышăнсан та — «этем чунĕн инженерĕсем» хайлавсенче **этем** йывăрлăхсене анчах мар, **хăйне хăй çĕнтерсе** малалла утнине сăнарланине курас килекен пулчĕ. Çĕр çине килнĕ çын çулĕ пĕрмаях çакнашкал чарăнура вĕç-леннипе килĕшес килменни анчах мар ку. Литература тĕпчевçин субӳективлă шухăшĕ те мар. Вăхăчĕ хăй çитрĕ (ыйтать). Пурнăçра ырă тĕслĕхсем нумайланса пынăн туйăнать юлашки çулсенче. (Çакна писатель-поэтсем хăйсем те палăртаççĕ: «Халĕ, асăрхăр, çĕнĕ вăй илсе пыратпăр. Чăваш патне чун тата хытăрах туртăнать.»[17]) Хăрушă чарăнуран вăй-хăват пуçтарса малалла çула тухакансем сахал мар (çĕртен пĕрре пулсан та — хаклă!). Пурнăçра темиçе чарăну та пулма пултарассине çамрăксенчен нумайăшĕ чухлаймаççĕ: чăн юлашкипе те арпаштарĕç, пĕртен-пĕр çул анчах тесе те йышăнĕç...

2003 ç. «Ялав» журналра икĕ хайлав пичетленнĕ: Владимир Ямаш çырнă «Кăвапаран татăлнă тымар» калав (Ялав. 2003. 1 №), Надежда Ильинан

«Даниил» калавĕ (Ялав. 2003. 10 №). Мĕнле çыхăну пур-ха вĕсем хушшинче? Иккĕшĕ те халăхăн, чĕлхен паянхи шăпийĕ, вĕсен пуласлăхĕ пирки шухăша яраççĕ. (Маларах ыйту лартса хурас килет: çакăнта мар-и-ха халăха пур ĕмĕрте те пĕрлештерекен тĕп идея? Паллах, литература чăн пурнăçăн тĕрлĕ-тĕрлĕ енĕсаманчĕсене çутатма тивĕç. Анчах та пурне те пĕр-лештерекен хăват иксĕлме тытăнсан çав шухăш, тивĕç пирки аса илни, тен, çăлса хăварĕ?)

Ямаш калавĕнчи тĕп сăнар — Мая, вăл Канадăна качча тухнă, халĕ тăван ялне курма килнĕ. Ют çĕршывра вăл чаплă пурăнать. Кунта вара — ялĕ юхăннă, çамрăксем хуланалла кайса пĕтнĕ. Ытларах вырăсла калаçать-шухăшлать хĕрарăм. Хушăран çав-çавах чăваш сăмахĕ тухса каять-ха хăйĕн (мĕн тăвăн, чăваш çуралнă пулсан!).

> «Господи!» — пуçне усса ларать çĕрĕк пĕрене çинчи хĕр ватă учителе итленĕ хыççăн. — Лучше бы не ездила сюда! Зачем? Зачем я это сделала? Хотя, конечно, здесь могила любимой бабушки... Çавăнпах приехала, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм! Эпир с мужем следили Раççейре мĕн пулса иртнине. Ял илемленет, чечекленет тесе шутланăччĕ. Ничего подобного! Все изменилось к худшему! Я просто убита — бедность, серость, неустроенность, мĕнле калас, — безобразие...» (57 с.)

Çурт умĕнче пĕренесем те çĕрĕк авă. Урăхла каласан, малашлăха юрăхсăр. Ямаш пулăмăн çиелти паллисене сăнарлать, пулса иртнĕ улшăнусем пирки **каласа** парать, вулакан умне ӳкерчĕк кăларса тăратать. Ял халăхĕ Майăран кулать тени (тăван çĕршыва пăрахса кайнăшăн) ĕненмеллех мар-тăр. Калавра та ку шухăш нимĕнпе те çирĕпленмест, пурнăçра вара — пушшех те. Ăмсанма, хĕрхенме пултарăччĕç-и тен...

Надежда Ильина пулăма тарăнрах тĕпчет, шаларах кĕрет. Тĕп геройĕ те унăн урăхларах — наци интеллигенцийĕ йышĕнчен.

Асра тытса пурăннă чухне вилмеççĕ вĕсем, леш тĕнчене кайнисем.

Даниил вара маннă, вĕлернĕ. Тымарĕсене татнă (4 с.).

Паянхи кун чăваш интеллигенцийĕн тымарĕсем таталнă апла. Анчах... малашлăхĕ те унăн питĕ тĕтреллĕ иккен.

> Мĕн усси пулчĕ апла çĕр çинче пурăнса irttернин?! Тĕрлĕ поэзи каçĕсем, конференцисем, чăвашлăх пирки кăшкăрашнă хитре сăмахсем — пĕртен-пĕр ывăлу та чăвашла калаçмасть пулсассăн — мĕн тума кирлĕ пулчĕç?! Йăлт арканнă, ишĕлнĕ. Даниилăн çеç мар — пĕр пĕтĕмĕшле ӳсĕмĕн пурнăç ĕçĕ-хĕлĕ харама кайрĕ (6 с.).

Ялта тымарсем упранса юлнине шанса **çула тухать** Даниил. Анчах вăл **çил-тăманлă çанталăкра çулран çухалса каять**. Вилĕме çĕнтерсе тăван килне аранах çитет арçын. Анчах та юратнă шăллĕпе (ултă çул курман ăна) унăн наркоман юлташĕсем палламасăр (!) Даниила мăшкăл кăтартса тăван килĕнчен кăларса пăрахаççĕ... Апла, Даниилăн **яла илсе каякан çулĕ** те ултавлă пулнă?

> Шухăшлавĕ пĕр тикĕс юхаймарĕ пулин те, кĕçех ăнланчĕ: вăл нимĕнле çулпа та мар — тăршшĕпех чăнкă çыран хĕррипе пынă иккен (12 с.).

Ачи-мăнукĕсене Джульетта, Давид, Лолита е çавăн йышши чăвашла мар ят хуракансен, чăн та, чунĕ те темĕнле «чăвашлăхшăн» ыратмĕ, ăсĕ халăх пуласлăхĕ пирки шухăшламĕ. Чăвашла пĕлмен мăнуксем çеç çуралсан, паллах, халăхăн малашлăхĕ те пулмĕ. Анчах та паянхи кун шанчăкĕ пĕтĕмпех сӳнеймен-ха. Асатте-аттесем юрланă юрра ачасене вĕрентейменшĕн айăпĕ те, яваплăхĕ те хамăрта. Ильина геройĕ, тем чул асап тӳссе irttерсен те, чĕрĕ юлчĕ. Ăна **калиткерен кĕртмерĕç**. Çитменнине леш енчен пĕри (Даниилăн вилнĕ ашшĕччĕ-ши?) утса пырса шашулккине шăкăрт çаклатса ячĕ.

> Анчах сăнсăр та хăрушă чĕрчун ун сассине илтсен те ун патне пымарĕ. Даниил çине пÿрнипе тĕллесе тепре хыттăн ахăрса ячĕ те — хура тĕтĕм юпи пулса — çĕр айнелле анса çухалчĕ (15 с.).

Çÿл тÿпере вара çутă парнелекен Этем сасси илтĕнет... Тен, пирĕн пĕртен-пĕр, юлашки шанчăк юлнă?.. (Тепĕр тесен, кашнине пурнăçра пĕртен-пĕр шанчăк çеç тивет-çке.) Ачи-пăчипе чăвашла калаçакан интеллигентсене те сахал мар пĕлетпĕр эпир.

Сăмах май каласан, Н. Ильинан ку тапхăрти тепĕр калавĕ те, «Турăсăр тупнă телей» (Ялав. 2001. 12 №), уçă финалпа вĕçленет.

> Чашлаттарса çумăр çурĕ, тĕнчене кисретсе аслати кĕрлерĕ. Кĕç пĕлĕт тăршшĕпе пушă вĕçĕ евĕр тăсăлса-авăнса илнĕ çиçĕм Çемекке ытамланă хурама тăррине чăнтлаттарчĕ. Юпа пек хăпарса кайрĕ çÿлелле сар тĕтĕм. Те аçа çапнă йывăç тураттинчен тухнăскер пулчĕ вăл, те Çемеккен хыпса çунан чунĕнчен йăсăрланчĕ (19 с.).

Çĕр чăтайми çылăхлă Çемеккен чунĕ аслатиллĕ çумăрпа çăвăнса тасаласса, хăй малалла урăхла пурăнма пуçласса шанас килет.

«Даниил» калавăн тĕп шухăшĕ-ыратăвĕ — халăх пуласлăхĕ, шăпи. Притча майĕ-мелĕсемпе йĕркеленнĕскер, вулакана нумай шухăшлама хистет вăл. Эпиграф вырăнне М. Горький йĕркисене илни те пĕлтерĕшлĕ: «И вот он ходит, ходит повсюду... Видишь, он стал уже как тень, и таким будет вечно! Ему нет жизни, и смерть не улыбается ему»[18](«Старуха Изергиль»). Ильина хайлавĕсенче Горький традицийĕсене те асăрхама пулать-и тен. Паллах, тĕплĕ тишкерÿ тусан.

Альбина Мышкина стилĕн лайăх енĕсенчен пĕри — кĕскелĕх. Кĕске предложенисемпех вăл чĕрĕ ÿкерчĕк ăсталать, туйăмсен хусканăвĕ-улшăнăвĕсене сисĕмлĕ палăртать. «Канăçсăр чĕре» калав (Тăван Атăл. 2003. 12 №) çакна тепĕр хут çирĕплетрĕ.

Виçĕ кун вырăн çинчен çĕкленеймесĕр хӳхлерĕ ун чух Вера (мăшăрĕнчен çамрăклах тăлăха юлсан. — *В.Н.*). Виçĕ кун ачисене хăратса чĕрене çурмалла кăшкăрчĕ. <...> Вăрăма тăсăлчĕ Верукăн тăлăх ĕмĕрĕ. Çак ĕмĕрĕн тахăш тапхăрĕнче вара çĕнĕрен утма, çĕнĕрен сывлама вĕренмелле пулчĕ унăн (38 с.).

Пĕчĕк калавра куç умне тĕп сăнарăн пĕтĕм пурнăçĕ тухса тăрать. Калав валли ытлашшипех те кунта информаци. Калăпăр, виççĕмĕш сыпăкра эпир кинеми патне таçтан та çырусем килнине пĕлетпĕр, тав çырăвĕсем. Героиня портретне ку деталь (сыпăкĕ те!) тарăнлатмасть. Вулакан ахаль те ăнланчĕ кинеми юнашар çын-сене чунтан пулăшма тăрăшнине. Ку сыпăка, ахăртнех, кăшт аталантармалла пулнă. Темĕнле схема пекрех пулса тухнă вăл.

Кăшт маларах «Ялавра» пичетленнĕ «Телей çулĕ» калав (2003. 11 №). Хĕрарăм, амăшĕ психологине лайăх туять çыравçă. Пĕр саманта вара ăнлантарсах çитерейммен: мĕншĕн Евук юхха хĕрарăм çулĕ çине тăрать. Ашшĕ-амăшĕ ăна пуринпе те тивĕçтернĕ. «Хатĕрлесе хунă, такăрлатнă сукмакпа çеç утнă вăл» (12 с.). Чунне ыраттармалли пĕртен-пĕр сăлтав пулнă унăн:

Ун чĕринче пĕртен-пĕр каччă — Кирилл пулнăран вăл урăх никама та чĕре патне ямарĕ, хăйне качча илес текенсене те тӳрккессĕн кăларса ячĕ (13 с.).

Тĕмшĕртме пулать-ха: ытлă-çитлĕ, тулăх пурнăç нумайăшне ататарать, тулаш пуянлăх кичемлĕх çуратать. Хăйсене валли кунашкал çынсем епле те пулин йăпанăç шыраççĕ. Тата чунне ыраттарнă арçынна тавăрас тени те пулнах. Урăхла каласан, характера шаларах кĕрсе пăхни ытлашши пулман пулĕччĕ.

2004 ç. А. Мышкина «Атте пилĕ» ятлă кĕнеке кăларчĕ[19]. Унта виçĕ повеçпе ултă калав пичетленнĕ. Икĕ повеçне маларах тишкернĕччĕ-ха[20].

«Атте пилĕ» (1999) повесть «Малтанхи пил» ятпа «Ялавра» кун çути курнăччĕ (Ялав. 2001. 2 №). Хурлăх хутлăхĕнче хӳтлĕхсĕр тăрса юлнă Алюнкка тĕнчи пирĕн ума тухса тăрать повеçре. Вун пĕрте амăшĕсĕр тăрса юлать вăл, виçĕ çултан — ашшĕсĕр. Йăтайми хурлăх тиенет ун çине. Çак хурлăха, сăнарăн туйăмĕсене вулакан чунне пырса тивмелле хут çине куçарнă Мышкина. Пĕр-ремĕш юрату кайăкĕ те вĕçсе иртет Алюнкка пурнăçĕнче вăхăт çитсен (5 сыпăк). Анчах та хурлăхлă кайăк пулнă иккен вăл. Ахаль те аманнă чунлă хĕр ачана вăл ытларах амантса çеç хăварать.

> Куççуль типсен хĕрача каллех пӳрт умне таврăнчĕ. Сывлама манса ашшĕне итлесе тăчĕ. Питĕ ерипен анчах сывлать. Алюнкка чунне нимпе ăнлантарса пама çук хаваслăх ярса илчĕ. Унăн кулас, сикес, выляс килчĕ... («Атте пилĕ». 123 с.)
>
> Анчах... анчах темле Вăй, асамлă Вăй, тĕттĕмлĕх сăнчăрĕсене çапса аркатрĕ. Хура шăтăка хупласа ăна çутта тĕксе кăларчĕ. Хăй юлчĕ. Алюнкка чунĕнче вара ĕмĕрлĕхех вилĕм шăрши — тин çеç савалана йывăç пылакĕ — асра юлчĕ (Çавăнтах. 126 с.).

Психологизм тарăнлăхне кĕрсе каять Мышкина. Тĕп сăнар Юрий Скворцовăн Славикĕпе («Славик» калав) Тамарăна («Хĕрлĕ мăкăнь» повесть) çывăх.

Повеçĕн кайранхи ячĕ шалта пуррине лайăххрах уçса парать. Ашшĕ Алюнккана шанни, пиллени, унăн тĕслĕхĕ хĕр ачана «хаяр пурнăçра» хăйĕнче вăй-хăват тупма пулăшать.

> Çак ырату çапса ярсассăн çĕкленме, ӳксессĕн тăма пулăшĕ. Çухату чуна хытарĕ, йывăрлăхсене çавăнтах çĕнтерме, пуçа пĕкмесĕр утма вĕрентĕ (128 с.).

Автобиографиллĕ прозăн курăмлă тĕслĕхĕ те ку повесть. А. Мышкина

ытлашши сăмаха тăсса ямасть терĕмĕр. Повесть сыпăкĕсем кĕске, çав вăхăтрах уçăмлă тата шăрçа пек илемлĕ сыпăнтарнă вĕсене. Шăпах повесть жанрĕнче лайăхрах уçăлать пулмалла Мышкина калас тенĕ сăмах. Калав чикки уншăн тăвăртарах пек.

«Ял калавĕсем» (Ялав. 2003. 1 №; 2004. 9 №; 2005. 2 №) ярăмсенче Н. Карайшăн çеç курăмлă стиль палăрать. Пĕчĕкçеç формăра чылай тарăн содержани типтерлĕ вырнаçтарма пултарни (уçса пани темĕпĕр: çыравçăн тĕллевĕ — вулакана хăйне уççи тытарасси, ахăр) 2001—2005 çç. прозăра урăх тĕл пулмасть.

Çаксенчен пĕр калавне илер-ха. Чи хăрушшине. Настя ятлă тăватă çулхи хĕрачана (Ялав. 2003. 1 №) амаçурипе ашшĕ чĕрĕллех тупăка чиксе хурса çăва çине кайса пытараççĕ. Çак хытса каймалла тискер те хăрушă ĕç пирки автор кĕске калаврах чунра йĕр хăвармалла çырса кăтартнă. Шалтан тухакан пĕлӳ-пултарулăх Карайăн, искусствăллă, суя сăмах сисĕнмест пĕртте. Чĕрепе туйса çырать пулсан та пĕтĕмпех виçеллĕ, сапăр. Чехова çывăх çыру мелĕ теме пулĕччĕ танлаштарма пикенсен.

«Пурнăç ӳкерчĕкĕсем» тесе ят панă Николай Карай хăйĕн кĕске калавĕсен тепĕр ярăмне (Тăван Атăл. 2003. 6 №). Вĕсен жанрне те çакнашкал палăртсан тĕрĕсрех пек. Кашнинчех вĕсенче — çын пурнăçĕнчи пĕр самант. Кашни хайлавра пĕр тĕп интонаци йĕркеленет («Таврăнмарĕ...» — вăрçăра хыпарсăр çухалнă ашшĕне амăшпе ачи чунтан кĕтни; «Тимĕре те тутăх çиет...» — хуйхă çынна пĕтерсе хума пултарни т.ыт.те) пĕр шухăш уçăлать. Кашни эпизод пĕр тĕп деталь çинче никĕсленет: Анюк кинемин тӳшекне налук тӳлейменшĕн илсе кайнине курнă Çемен çĕнĕ юрă юрлаймасть («Ма юрламастăн?»), сурăх та хăй ятне пĕлет иккен («Сурăх»). Калăпăшĕ ку калавсен пĕчĕк пулсан та, сюжетăн тĕп элеменчĕсем (ĕç пуçламăшĕ, аталанăвĕ, кульминаци, ĕç вĕçленĕвĕ) чиперех палăраççĕ. Пĕчĕк ӳкерчĕк вара илемлĕ çаврăм пулса тăрать.

Кĕске жанрпа çине тăрса ĕçлекенсенчен тепри — Василий Антонов. Акă унăн «Пехиллĕ çыру» калавĕ (Тăван Атăл. 2005. 1 №). Характерсене прозаик

тĕрлĕ енлĕ уçса панă. Каччи вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн Люба улшăнса каять. Хăйне юратса качча илнĕ Леонида (вăл та чирлесе вилет — пурнăç çаврăмĕ!) нумай хуйхăртать. Ытлашши сăмах вакласа кайман калавра. Ячĕ вара шалта пуррине, е тĕп шухăша, пĕтĕмпе палăртаймасть пек. Тĕрĕсрех каласан, ансăрлатать, хĕссе хурать. Пĕтĕмĕшле пăхсан, ку автор пултарулăхĕнче диалектизмсем сахал мар. Хăш-пĕр чух вĕсем, чарăну палли евĕр, текст патне тӳрех çывхарасран тытса чараççĕ.

Паянхи кун сăнарĕ-лару-тăрăвне, тискерлĕхне палăртать В. Антонов («Пăлхав», «Хаса», «Бумеранг», «Салтак киле таврăнчĕ» // Ялав. 2002. 1 №; «Тĕлĕк» // Ялав. 2002. 4 №). Чечня вăрçинче вилĕмпе пĕрре мар куçа-куçăн тĕл пулнă Йăван киле çитсен хăй çине алă хурать. Хăрушă!

> «Ман вилĕмшĕн саманана айăплăр. Анне, Маруç, каçарăр мана». Юлашки сăмах хыççăн, пăнчă лартас вырăнне, патакне юр çине чиксе хунă. Патак тӳп-тӳрĕ тăрать. Кăшкăру палли пек (Ялав. 2002. 1 №. 45 с.).

Çартан килсен вăл ĕç çуккипе тепре каялла укçа ĕçлесе илме каять! Килнĕ çĕре вара амăшĕ анчах мар, юратнă хĕрĕ Маруç та ĕçке ярăннă иккен. Самана çеç айăплă мар пуль-ха пуриншĕн те...

«Шурă хăрăм» калавăн (Тăван Атăл. 2004. 1 №) тĕп сăнарĕн — Пракаçăн — Турă панă пултару пулнă. Пĕчĕкрен илемлĕ ӳкерме пултарнă ача ӳссен хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлаймасть, художник пулаймасть. «Ĕçкĕ мана астарсах ячĕ...» — тет Пракаç (47 с.). Паллах, ялта пултарулăх ĕçĕпе çеç пурăнма çук — колхозра ĕçлемелле, килте-çемьере... Мăшăрĕ те ăнланмасть Пракаçа. Пурнăç йĕркеленсе кайнă пек чух — тепĕр хут ĕçме пуçлать арçын. Ача чух ĕнтĕ çитĕннисен пулăшмалла пулнă аталану çулĕ çине тăма, каярах — айăпĕ хăйĕнче пулĕ, хăйĕн вăйсăрлăхĕнче. Уйрăм çын хаклă-хĕ, пĕлтерĕшĕ чакни хальхи саманан тĕп палли пулса тăчĕ курăнать.

> Мĕн каласа йăпатма пĕлĕп эпĕ ăна — çĕр çинче аташнă чуна? Мĕнле

çул кăтартас-ха хăйне туптăр тесе? Хальхи саманара ĕçкĕçĕ мар, кашта пек çын та никама кирлĕ пулмасăр хуçăлать те çĕрет. Халь ырă ĕç тунăшăн тавтапуç сăмаха черкке ылмаштарчĕ (48 с.).

Рынок саманин тӳнтерĕ-ши ĕнтĕ ку? Тата çынна хăй пулăшу ыйтмасан пулăшмалла-ши? Д. Гордеевăн «Аххаяс-маххаясĕ» те çав шухăшпа вĕçленет (Ялав. 2003. 7 №). Тепĕр енчен — кашнин хăйĕн пурнăçĕшĕн яваплăх туйма вĕренмелле-çке. Анчах та кашниех вăйлă пулаймасси те паллă. «Такăннă, ӳкнĕ е вараланнă çынран алă сулса та ун çине ярлык çакса хăварса пăрăнса иртес марччĕ пирĕн, этемре кирек хăçан та çынлăх шырасчĕ, унăн чун-чĕринче çынлăх пĕрчи тупса, унра пархатарлăх çимĕçĕ ӳстерме тăрăшасчĕ. Çапла ăнланатпăр эпир этем умĕнчи писатель тивĕçне», — тенĕччĕ писатель-гуманист Юрий Скворцов[21]. Çак шухăш кирек хăш вăхăтра та тĕрĕс пулĕ. Тен, литературăн та çынна айăккинчен сăнанипе çеç çырлахмалла мар, ун патне çывăхрах пымалла, ырă тĕслĕхсемпе (вĕсем пурах!), тен, урăх майсемпе те уйрăм çын хаклăхне ӳстерме пулăшмалла?

Валентина Эльпи пултарулăхĕн илемне тӳрех палăртма çук. Темĕнле ăшă (кил ăшши, чун ăшши), ăш-пиллĕх, чăваш тăприн тĕревĕ, Сарă кун çĕршывĕн (çутă, телейлĕ çĕршыв) çутă пайăр-кисем сисĕнеççĕ ун хайлавĕсенче. Хамăр аваллăхпа, чăвашлăхпа çыхăнтаракан хĕлĕхсем йĕркелеççĕ пулмалла вĕсен тĕп кĕввисене. (Геройсен ячĕсем те, куратпăр, чылай чух чăвашла ятсем.) Çакăн-та, ахăртнех, ял çынни ун кĕнекисене юратнин пĕр сăлтавĕ те. Тата унăн произведенийĕсенче чăн пурнăçпа мистикăллă сулăм, тĕлĕнтермĕш уйрăлми çыхăнса тăраççĕ. Палăртнă тапхăрта Эльпин «Уйăх çинчи пике курнă» (Ялав. 2000. 8 №), «Юнтарнă пĕлĕт» (Ялав. 2002. 9 №) повеçсем пичетленнĕ. Умрай Пушака иртнĕ кун-çулĕ пирки (паллах, кашнин шăпи пирки те!), акă, уйăх çинчи кĕвентеллĕ пике йăлтах пĕлет: «Илмелле çеç алла унăн темиçе çул каялла çырнă кун кĕнекине» (7 с.). Çак «пикех» повесть вĕçĕнче Умрай телейлĕ пулнишĕн савăнать. (Мотив пек çаврăм туса хайлава илемлĕ вĕçлет.)

Аркадий Казанов çыравçăн пĕр лайăх енне асăнса хăварас килет: туйăмăн

пĕчĕк уйрăмлăхне, сĕмне, çурма тонне, хусканăв-не палăртма пултарать вăл («Вилеймен-ха эп, Улита...». Калав // Ялав. 2001. 11 №; «Юрату çинчен юрату». Калав // Тăван Атăл. 2002. 8 №. 35—40 с.).

Василий Петровăн кĕнекине[22] 1988—1994 çç. çырнă тăватă повесть кĕнĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн тата пĕр тĕркере вĕсем, паллах, урăхларах курăнаççĕ. Чи малтанах куç тĕлне пулни вăл — писатель чĕлхи. Вăл **чăвашла** çырма тăрăшать, çырать те. Тĕл-тĕл хăнăхнă (хăнăхтарнă) сăмахсем те чăвашла чиперех янăраççĕ: *сивĕткĕч, çĕртеш.* В. Петров пысăках мар ӳкерчĕк тума пултарать (сăнарлă ӳкерчĕк тесе калас килет ăна), тата çут çанталăк сăнлăхĕсем витĕмлĕ (уйрăмах «Хура çил» повеçре), анчах та темĕнле курăнман чикĕре, картара вырнаçнă пек (чăваш характерĕ пекрех-ши?).

Геройсен тĕнчине шалтан тĕпчеме те, тулаш лару-тăрăва шута илме те тăрăшать çыравçă. Анчах та сăнарсен утăмĕсем пур чухне те ĕнентерӳллĕ пулса тухаймаççĕ. Акă, «Венчет çĕрри» повеçе илер: темĕн чухлĕ инкек илсе килнĕ çĕрре никам та кăларса пă-рахайманни ĕненмеллех мар. Ачисем ашшĕ эткерне йышăнманни те çавнашкалрах («Мул»).

«Ăнланас тесе кирек мĕнле япалана та шалтан курма хăнăхтарнăччĕ эп хама», — тет Марина Карягина çырнă «Хура тумлă арçын» (кун кĕнекинчи роман) хайлавĕнчи хĕр (Ялав. 2003. 12 №. 70 с.). Ку романа тишкерме ăспа туйăм чиккинче çеç пулать-тĕр. Ăн юхăмĕ, туйăмсен юхăмĕ, чун хĕлĕхĕсен карăнтарăвĕ... Пĕр çын чунĕнче вырнаçма пултараймасăр пĕтĕм тулаш тĕнчене (хăй кăна пĕлмелле!) хупăрласа илнĕ туйăм... **Ыттисен** куç умне курăнман Аслă Юрату (мĕнле вăй-хăват кирлĕ пулнă пулĕ Альăна ăна хăйĕнче упрама!) юратнă çынра çеç мар, ĕмĕрлĕхре пурăнни... Кунтан та шала кĕме пулĕ-ши, юрĕ-ши **теприн** тĕнчине? Дневник форми ирĕк парать пулĕ-ха вăл. Вулакан чĕрине кунашкал туйăм тӳреммĕн вырнаçасшăн ăнтăлать. Кашни вулакан çакăн пек çыруна, паллах, йышăнаймĕ. Тепĕр сĕмленӳ те пур — чуна вĕçне çити пĕрех никама та нихăçан та уçса параймăн, сăмахсем те чи тасине, тĕкĕнме юраманнине упраса хăварма пулăшаççĕ. Тишкерекен тапхăрта çакăн евĕрлĕ текст урăх çук. Тен, тарăнлăха кĕрсе кайма ăнтăлнине Г. Федоровăн тексчĕпе

(«Ай, мăнтарăн хир мулкачи») танлаштар-ма пулĕ. Çапах та вĕсене уйăраканни ытларах. Карягина тӳреммĕн туйăмăн тĕнчине, шалти тĕнчене кĕрет, Федоров — тулаш тĕнче витĕр шалтине тĕпчет[23].

«Эпикăлла сулмаклă» произведенисем те пичетленчĕç тишкерекен тапхăрта. Чи курăмлă тĕслĕх — Лаврентий Таллеровăн «Шеремет» (1995—2003) романĕ[24]. Ăна Юрий Артемьев тĕплĕ хак пачĕ[25]. Таллеровăн тепĕр хайлавне те асăрхамасăр иртме çук. «Перентей вăрманĕнче уçăлса çӳрени» (2002—2005) повесть вăл (Тăван Атăл. 2005. 8 №). Интеллектуаллă прозăн пĕр тĕсĕ ку хайлав. Тен, интеллигентлă тесен тата тĕрĕсрех пулать. Ăс-тăн, пĕлӳ, кăмăл-туйăм сукмакĕсем тăрăх çулçӳреве тухаççĕ геройсем. Сукмакĕсем таçта та илсе çитереççĕ — литература, культура, истори (чăвашăн çеç те мар) хутлăхĕсене. Уçă сывлăш хумĕ килнĕн туйăнать ку повеçрен. Пире те вăл шухăш-кăмăлăн асамлă вăрманĕн сукмакĕсем тăрăх утма илĕртет.

Георгий Орловăн «Ирхи йĕрсем» (2004) романĕ пирки Георгий Федоров сăмах пуçарнăччĕ. «Пур-ха, хăш-пĕр автор халĕ те (калăплă жанр хăйне пысăк сулăм кӳрессе ĕненсе) чип-чипер повеçсенех роман тесе пахаласшăн. Г. Орловăн «Ирхи йĕрсем» (2004) хайлавĕ ак: теплерен очерклăх ум илет унта, хушăран — аса илӳ, каярах — эссе евĕр сыпăнакан калу йĕрки... Çыравçи хăй ку «япалана» роман тесе хаклать-ха, çаплах-ши вăл? Ытла та субӳективлă интонаци палăрать унта, мĕнпур ĕç-пуçа аса илекен пĕр сăнар (Сатур) тавра шăнăрланса пыни, сăнлакан пурнăçа ун куçкурĕ, чункурĕ витĕр кăларни. Автобиографилĕх, документлă чăнлав паллисем, чун уççиллĕ лирикăлăх — çакă пурте кашни хăйне тивĕç йĕр тупайман. Роман вара вăл — объективлă жанр, ку объективлăх тĕрлĕ сийсем, тĕрлĕ стильсем пĕр-пĕринпе мĕнле шайлашнинчен шăтса тухать. Романра тĕп стиль çук-тăр, кашни стилĕ — тĕпре, никĕсре; нихăшĕ те пĕри теприне пăхăнмаççĕ. Орлов шухăш-кăмăлĕ вара пĕр стиль йĕрĕпе амаланса пырать»[26].

Хисеплĕ профессорăмăр роман теорийĕ тавра йĕрленнĕ шухăшĕсем тĕрĕс пек. Анчах та пĕр енлĕ тĕрĕслĕх мар-ши ку? Романа кунашкал пăхас пулсассăн

эпир М. Прустăн субӳективлă эпопейине те çак жанр картине кĕртейместпĕр. Пĕр çын «куçкурĕ», «чункурĕ» витĕрсе тăмастчĕ-ши ку хайлавра? Е, калăпăр, Д. Дефо XVIII ĕм. çырнă «Робинзон Крузо» роман пĕтĕмпех объективлă-ши? Кунта эпир Георгий Орлов дилогине[27] асăннă авторсемпе юнашар тăратса пăхас шухăшпа хĕмленместпĕр-ха. Кирек епле жанр та канонсене çĕр процент тивĕçтерейместь тесе хăварасшăнччĕ. Унсăр пуçсăр, Георгий Орлов прозаикăн çитĕнĕвне асăрхамасăр иртес килмест. Сăмах — 1-мĕш кĕнеки пирки. Çав автобиографилĕх тени пуринчен аван уçăлнă хайлавра. Пурлă-юрлă, çапах та телейлĕ ачалăх, çемьери килĕшӳ, чăпта çапнă вăхăтсем, Çĕрпӳ ярмăрккинче пĕрремĕш хут пулса курни — калавçă пысăкланса пынăçемĕн тепĕр картлашка çине хăпарса пырать тейĕн (паллах, вăл çапла пулмалла та!) — пурнăçа шăпах çав ӳсĕмри ача куçĕпе сăн-лать. Ытлашши сăмах вакламасăр аса илет калавçă. Лăпкă (обӳективлăх патне туртăнса), çав вăхăтрах лирикăллă туйăмлă юхăма йĕркелеççĕ ку самантсем.

Георгий Федоров чăваш романĕн хăй евĕрлĕхне нумай çул тĕпчет. Унăн шухăшĕсем, шырани-тупнийĕ ĕнентерӳллĕ, вĕсене хирĕçлеме те йывăр. Ун пек тĕллев те çук-ха пирĕн. Пĕр-икĕ ыйту çеç хускатас килет. Кирек епле жанр та аталанни паллă. Вăхăт иртнĕçемĕн романăн илемлĕх мелĕсем те, тытăмĕ те улшăнса пыраççĕ мар-и? Маларахри тапхăрсем патне таврăнсан вара, тен, шăпах «Танатана», «Хура çăкăра» **чăн чăвашла романăн** кăтартуллă тĕслĕхĕсем вырăнĕнче картмалла? Шухăшлавĕ вĕт кашни халăхăн урăх. Тепĕр майлă каласан, вырăссемшĕн вĕсем уйрăм новеллăсенчен çырнă хайлав пулсан, пирĕншĕн — роман.

2003 ç. «Тăван Атăлăн» 5, 6 номерĕсенче чи малтанах «Шур-шур урлă хур кайăксем...» повесть куç тĕлне пулчĕ. Авторĕ — Анатолий Ыхра — пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă ĕçтешĕмĕр пулнипе анчах мар. Астăватăп, ку повесть пичетленнишĕн Анатолий Александрович темĕнле **ыттисем** туйман савăнăçпа савăннăччĕ. **Чун çумĕнчине** каласа пама пултарнишĕн ахăртнех, сăмах çине куçарма пултарнишĕн. Чăн та, уйрăм çыннăн чун çумĕнчи кунта илемлĕ произведени пулса тăнă.

Çиелтине илсен, палăртнă тапхăрта ку жанрпа (çырулла повесть) никам та ĕçлемен. Жанрĕ, паллах, çĕнĕ мар. Анчах та Ыхра ăна çĕнĕ содержанипе уçса панă, çыхăнтарнă. Чĕлхе туйăмĕ çав тери çивĕч çыравçăн. (Поэт, тĕпчевçĕ, редактор пулма хăват çи-терни ăнсăртран пулмасть.) Повесть ятне те, эпиграфне те халăх юрринчен илнĕ.

Шур-шур урлă хур кайăксем
Шур-шур урлă пулсассăн та
Тытассăм килет.
Уй-уй урлă тăвансем...
Уй-уй урлă пулсассăн та
Курассăм килет.

Тĕп герой — «хур кайăк чунĕллĕ Пайтул» (Тăван Атăл. 5 №, 21 с.)(кашни çыру айне вăл хăйĕн тĕрлĕ енне уçса çырать-ха: «хур кайăк пулма ĕмĕтленекен Пайтул» (19 с.), «эсĕ сываласса шанакан пиччӳ Пайтул» (20 с.), «Пайтул-дружинник» (22 с.). «Хур кайăк чунĕллĕ» пулни çамрăк чăваш каччишĕн чи пĕлтерĕшли пек туйăнать. Ăнсăртран мар вăл юратнă Луиза йăмăкне те «хур кайăк пек йăмăкăм» тет (25 с.). Пĕчĕк чухне Луиза çаран çине канма анса ларнă хур кайăксем çӳлелле хăпарса вĕçсе кайнине курнă иккен. Килне çитсен амăшне: «Манăн питĕ хур кайăк пулас килет», — тенĕ. Пайтул çав ăнтăлун пĕлтерĕшне çулсем иртсен ăнланать:

> «Эсĕ хур кайăк пулас килет тени ахальтен мар. Таçтан пĕлĕтрен килекен шухăш калаттарнă сана. Ватă несĕлсен йыхравĕ терĕ ун пирки Алмас Паттăр.
>
> Тĕлĕнмелле, Уйăх çинче те чăваш хĕрĕ, Алтăр Çăлтăр та — чăваш хĕрĕ, нумай-нумай ĕмĕр хушши кăнтăралла вĕçекен хур кайăксем те — чăваш хĕрĕсем. Тĕнчери пилĕк пин тĕрлĕ халăх хушшинче чăваш ывăлĕ

вырăспа тата американецпа* пĕрле космоса пуринчен малтан ахальтен çĕкленмерĕ пуль» (18 с.).

Хур кайăк лейтмотивĕ Луиза пурнăçне те пĕр ӳкерчĕк пек уçса парать. Уйрăм деталь-эпизодсем çирĕп çыхăнса тăраççĕ, тулли сăнар тăваççĕ. Спутник хулана та Пайтул Хур кайăк Çулĕ ят парас тесе ĕмĕтленет.

Çамрăк çын вĕреннĕ вăхăтра та, çарта та тăван чĕлхишĕн, халăхĕшĕн чунне пама хатĕр. Автобиографилле повеçре унăн тасалăхĕ та, айванлăхĕ те алă тупанĕ çинчи пек. Произведенире самана сывлăшĕ, вăхăт (1960-мĕшсен вĕçĕ) идеалĕ паллисем (Андриян Николаев паттăрлăхĕпе хавхаланни, мухтанни, Октябрь уявĕсем, дружинник ята тивĕçлĕ пулма тăрăшни) чĕррĕн, анлăн сăнланса юлнă. «Пирĕн вăхăтăн геройĕ» тенĕ пулĕччĕç ахăр тĕп героя унăн саманташĕсем, хăй пекех сăпайлă чăвашсем. Самана идейи-идеалĕсене вĕсем таса чунпа йышăннă. Ку вăл — çав Вăхăтăн палли. Самана геройĕ епле улшăнса-аталанса пынине сăнама-танлаштарма ку хайлав аслă классенче вĕренекен шкул ачисем валли те лайăх тĕслĕх.

Сăмах май тата А. Ыхран 2000 ç. кун çути курнă «Пăлхар çийĕн вĕршĕнсем хĕвĕшеççĕ» повесть-эссене (1996—1998)[28] асăнса хăварас кăмăл пур. Унта та писатель чăваш историйĕ, культури, хăй вăхăтĕнчи культурăпа литература хутлăхĕнчи лару-тăру пирки шухăшлать. Чăн пурнăçпа художествăлла шухăшласа кăларни кунта уйрăлми пĕрлешнĕ. Кĕнекене алла тытсан малаллах вулас килет.

«Тĕтреллĕ çумăр витĕр» тесе ят панă Надежда Григорьева «Тăван Атăлта» (2003. 9 №) пичетленнĕ пĕрремĕш калавне. Ячĕ те, калавĕ те тӳрех асра юлать. Çилçунат ятлă лаша шăпи тата Кавĕрлепе Кĕтерин шăписем параллельллĕ, пĕр майлă аталанаççĕ калавра. Çав вăхăтрах геройсен пĕр пекрех пурнăç саманчĕсем вĕсене çывăхлатаççĕ. Çывăх традицисенчен тӳрех Л. Толстойпа Ч. Айтматов аса килет. Анчах та çамрăк автор классиксене

* Текстра йынăш кайнă. Тĕрĕссипе: украинецпа.

тӳреммӗн «усӑ курнӑ» темӗн. Унӑн Лашинче чӑваш шухӑшлавӗ-характерӗ паллисем сисӗнеççӗ. Ӗçченлӗхӗпе, тӳсӗмлӗхӗпе, хуйха-суйха чӑтса irттерме вӑй-хӑват шыраса тупма пултарнипе вӑл хӑйӗн хуçине Кавӗрлене тата Кӗтернене çывӑх. «Шухӑшлакан шухӑшӗнче» те Çилçунат ытлашши тарӑна кӗрсе каймасть (е тытса чарать хӑйне):

> «Пӗтрӗ ман тиха, — тесе шутларӗ вӑл кунран кун. — Апла пулсан ман пурнӑç чуппи те чарӑнчӗ. Мӗн туса пурӑнас-ха халӗ? Мӗн туса?!» (53 с.)

Малалла вуланӑçемӗн чӗлхесӗр янавар чӑнах та çапла шутлама-туйма пултарнӑн туйӑнать. Апла пулсан, автор вулакана ӗнентермелле, чунне тивмелле çырнӑ — ку вара çитӗнӳ. Калав вӗçӗ усӑ пулни шанчӑкпа пӗр хурӑмлӑ. Тӗтреллӗ çумӑр хыççӑн тавралӑх анчах мар, асапланакан чун-чӗресем те тасалса çӗнӗрен пурӑнма мехел тупассӑн туйӑнать.

Çамрӑк авторсенчен тата Татьяна Краснова ятне асӑнма кӑмӑллӑ. «Юр пӗрчи юратӑвӗ», «Чи пысӑк парне» ятлӑ кӗске калавӗсем унӑн «Тӑван Атӑлта» пичетленнӗ (2005. 12 №). Асра юлаççӗ вӗсем. Пӗрремӗш калавӗнче (прозӑлла сӑвӑ жанрне çывӑх вӑл) пурнӑçӑн пӗр асаплӑ-ыратуллӑ самантне палӑртнӑ. Туйӑмсен тасалӑхӗ, ирӗклӗхӗ сисӗнсе тӑрать унта. Тепӗр калавӗ — пӗр утӑм пирки. Амӑшӗ пек çемçе, усӑ чунлӑ Надюша хӑйӗн чи çывӑх çыннишӗн тем те тума хатӗр. Амӑшне операци тума укçа çитеймест. Надя хӑйӗн вӑрӑм та илемлӗ çӳçне сутса çывӑх çыннине çӑлса хӑварма укçа тупасшӑн. Надя характерӗ, кӑмӑлӗ вулакана яр уççӑн курӑнса каять çак эпизодра. Урӑхла каласан, кӗске хайлавра Т. Краснова нумай **пӗлтерме** пултарнӑ.

Çамрӑк прозаиксенчен Лариса Викторовӑна та палӑртас килет. «Тӑвар тутиллӗ шурӑ çӑкӑр» калав — «пурнӑç тӗпне» лекнӗ çынсен шӑпи-нуши çинчен. Вӗсен хушшинче — улттӑри Сергей те (кунта маларах вуланӑ тепӗр калав та аса килет: Марина Андреева çырнӑ «Пысӑк тӗнчери пӗчӗк чун» калаври (Ялав. 2002. 12 №) тӑваттӑри Максимӑн шӑпи те Сергейӑнни пек çаврӑнса тухнӑччӗ).

Танлаштарупа уйрăм деталь, портретпа уйрăм эпизод Л. Викторовăн уйрăмах ăнăçлă йĕркеленеççĕ...

> Хĕрарăм сăнĕ нумай нуша тӳснĕ çынна аса илтерет. Çур ĕмĕр те пурăнман-ха вăл. Анчах сăнĕ-пуçĕ унăн питĕ ватă, чылай хурлăх, нуша ласканă курăнать ăна. Ĕлĕк кăвак тĕслĕ, нумай арçын пуçне çавăрнă чакăр куççем шалалла путса кĕнĕ, вĕсем тахçанах хĕмленсе ялкăшма пăрахнă ĕнтĕ, тĕнче çине сӳрĕккĕн, чун ыратăвĕпе пăхаççĕ. <...> Кăвакрах тĕслĕ плащ çанни вĕçĕсенче типсе ларнă, хĕвелпе çил çинче нумай çӳренипе кушăрканă алăсем курăнаççĕ. Аллисем çуркаланса кайнă, чĕркеленсе, кĕсенленсе пĕтнĕ, чĕрнисене те нумай вăхăт касман курăнать, вĕсем айĕнче хура çĕр вăрлăх акмалăхах пуçтарăннă. Пуçĕнче çӳçеллĕ тутăр, анчах çӳçисем пăт-пат çеç курăнкалаççĕ, вĕсене юриех пĕтĕм вăйпа тăпăлтарнă тейĕн. Тутăрăн пĕр енне ал лаппи сарлакăш çурса кăларнă, çав çурăкпах пилĕкне туртса çыхнă вăл. Кăвакарнă çӳçĕ тутăр айĕнчен сапаланса тухнă та ниепле те каялла кĕресшĕн мар... (Тăван Атăл. 2004. 10 №. 50 с.)

Ăнсăртлăхĕ пĕр калав валли, тен, ытлашшипех те. Сергей Варвари мăнукĕ иккен, ырă кăмăллă Аркадий — Варук ывăлĕ. Аркадий ашшĕ — Варвари упăшки Петĕр... Тепĕр тесен, шăпах çак ăнсăртлăх геройсене уйрăлми пĕрлештерет, калава пĕр пĕтĕмлĕ тăвать. Тепĕр самант та ку калавшăн (пĕтĕм хальхи литература контекстĕнче пăхсан та) пĕлтерĕшлĕ туйăнать. Унăн геройĕсем, пурнăç чăтмалла мар асаплă-тертлĕ пулсан та, ăна юратаççĕ, малалла пурăнма ĕмĕтленеççĕ. Нумайранпа нушаланакан Катăк Ваçça та çавах:

> — Варвари, Чалăш Пушмак, итле-ха, вилес килмест вĕт-ха ман, пурăнас килет. Пурăнни вăл лайăх.
>
> — Мĕн пурăнни ĕнтĕ пирĕн?
>
> — Пулин. Пурнăç вăл хуть те мĕнле пулсан та лайăх. Кашни чĕрчун пурăнасшăн ăнтăлать вĕт, эпĕ вара этем. <...>

— Вилес килмест манăн. Турăçăм, вилес килмест. Нумай пурăнтăм çак тĕнчере — аллă çул таранах, анчах тепĕр çĕр çул парсан та пурăннă пулăттăм (52, 53 с.).

Кĕçех вилессине туякан Варвари те:

«Пурнăç, мĕнле лайăх иккен вăл, тӳпе тап-таса та яп-янкăр, сывлăш уçă, кăкăр туллин сывлас килет...» (61 с.)

Юлашки çулсенче эпир çине-çине хăйсене хăйсем вĕлерекен е сарăмсăр вилекен сăнарсемпе паллашатпăр. Ку геройсен шă-пине никам та ăмсанмĕ. Апла, пурнăçа, утас çула суйласа илесси **çынран** килет, унăн вăйĕ/вăйсăрлăхĕнчен... Çакăн йышши хайлавсем шанчăк çуратаççĕ, умра çутă пур-ха, сӳнмен тесе...

Тишкерӳ вĕçĕнче пĕр сăнав хушса хурам. Пăхса тухнă тапхăрта пичетленнĕ хăш-пĕр кĕнекесен аннотацийĕнче вĕсем «Çулталăкри чи лайăх кĕнеке» ята тивĕçнине палăртса хăвараççĕ. 2003 ç. Наци библиотеки «Çулталăкри чи вуланакан кĕнеке» («Самая читаемая книга года») ятлă конкурс ирттерет. Ку конкурс сумĕ çулсерен ӳссе пырать. Çав конкурс çĕнтерӳçисенчен пĕри пулнине пĕлтересшĕн пулмалла çав аннотацисенче. Мĕншĕн тесен унта темиçе номинаци, апла пулсан — çĕнтерӳçĕсем те темиçе. Анчах та «чи лайăх кĕнекепе» «чи вуланакан кĕнеке» хушшинче танлаштару палли лартма пулать-ши? Çук пулĕ. Официаллă ят урăхла пулнинче çеç мар ĕçĕ. Пурте вулакан кĕнеке яланах чи лайăххи, чи илемли-ши? Сăмахран, Г. Айхи сăввисене хăçан та пулсан алран алла парса вулĕç-ши? Авторне вара пĕтĕм тĕнче пĕлет.

* * *

Пĕтĕмĕшле илсен, палăртнă тапхăрти проза паянхи куна ӳкерсе кăтартма тăрăшать. Ытларах чухне ку «ӳкерчĕксем» пĕр евĕрлĕрех, пĕр енлĕрех пулса тухаççĕ; чăнлăха епле пур, çапла кăтартса параççĕ: ял юхăннине; ялĕ те, хули те

ĕçкĕçсемпе, ĕçсĕрри-семпе тулса ларнине; çынсем пĕр-пĕрне ним выРăнне хуманнине... Ĕмĕрхи «мĕншĕн», «кам айăплă», «мĕн тумалла» текен ыйтусене лартни, тарăна кĕрсе кайни питех те сайра.

Хайлавсенче идеала çывăх герой çеç мар, ырă тĕслĕх пулмалли герой, вăйлă характер курăнмасть. Тăван çĕршыва, халăха, пурнăçа юратма-хаклама вĕрентекен произведенисем çукпа пĕрех.

Хĕрарăмсен прози тата ытларах аталанать. Ку вăл çĕршывĕпех палăрнă туртăм. Кунта хăйне евĕрлĕ парадокс пур: хĕрарăм пурнăçра та, литература ĕçĕнче та вăйланса пырать, хайлавсенче вара хальлĕхе вăйсăр хĕрарăм сăнарĕ çеç курăнать.

Пурнăçа пĕр енлĕ çеç кăтартакан тенденци темиçе çамрăк прозаик хайлавĕсенче улшăнма-иртме пуçлать.

## Литературăпа асăрхаттарусем

1 Идеологипе çыхăнтарни халĕ те сисĕнсе тăрать кунта. «...Паян пулчĕ-пулмарĕ идеологи ăнлава хурлатпăр. Идеологийĕ вара тĕрлĕрен-тĕр-ха вăл: политикăллă идеологи, эстетикăллă идеологи т.ыт.те. Ăспа чун-хакăл ĕçĕ вара нихăçан та идеологисĕр аталанаймасть. Апла, тен, сăмах искусствинче политика идеологийĕ хуçаланнине тиркес пирĕн?» — *Федоров Г.И.* «Ĕнтĕ шухăш килет те шухăш çаврăнать...» (Е. Сидоровăн ăслăлăхри пултарулăхĕ пирки шухăшланă май пуçа килнĕ ик-виç сĕмленӳ) // Фольклор тĕпчевçи Ефросиния Сидорова (Биобиблио-графический справочник). Чебоксары: ЧГИГН, 2000. С. 47.

2 «Халĕ çитĕнекен ăрăва пурнăç идеалĕсĕр хăвартăмăр», — тет Д. Гордеев хăйĕн статйинче пăшăрханса. Литературăри лару-тăру пирки те çавнах каламалла. — *Гордеев Д.* Ача тĕрми те кирлĕ-шим? // Хыпар. 2010. Нарăс, 27.

3 Танлаштарма çакăнта пăхăр: *Родионов В.* Халăхăмăра тĕп идея кирлĕ // Хыпар. 1992. Авăн, 23.

4 *Эльмен У.* Ма инçе-ши çăлтăрăм? Повеçсем, калав. Шупашкар: Чăваш

кĕнеке изд-ви, 2001. С. 40.

5 *Эльмен У.* Кая юлнă ӳкĕнӳ. Повесть. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. 207 с.

6 Çак шухăшсене вырăс писателĕ Виктор Ерофеев та Шупашкара килсен çирĕплетсе пачĕ: «Çĕршыва хĕрарăмсем çăлса хăварĕç. Вĕсенче яваплăх туйăмĕ пысăк». — *В. Ерофеев.* «Чăваш Ен маншăн — Геннадий Айги» // Хыпар. 2010. Çурла, 21.

7 «Чăваш литературинче питĕ хальччен пулман япала вулас килет. Философиллĕ хайлав та ан пултăр вăл, «пулмасла, пулма пултарайман эпизод-событие сăнлани» те ан пултăр вăл, чĕлхи те, вăхăчĕ те, çынни те пултăр çав япалара, этеме пурăнма виçсе панă çĕр савăнăçĕ те, çĕр пӳкли те пултăр çав япалара. Пурăнас килтĕр çав хайлава вуласан, чăтăмлă пулас килтĕр. Мĕнле илемлĕх мелĕсемпе çырса кăтартмалла иккенне ăна ăсти хăй пĕлет». — *Хв. Агивер.* Чăваш халăхĕ тата миçе çул пурăнĕ? (Г. Федоровăн «Ĕмĕр чиккисен ани...» статйине (Тăван Атăл. 2005. 8 №) сӳтсе яватпăр) // Тăван Атăл. 2005. 10 №. С. 58.

8 *Федоров Г.И.* Чăваш литератури (1945—1985 çулсем). Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар: ЧГУ, 2004. С. 379.

9 *Чехов А.П.* Спать хочется // Избранные сочинения: в 2 т. Алма-Ата: Жазушы. 1983. Т. 2. С. 31.

10 Чăваш литературинчи натурализм аталанăвне В. Абрамов аван тишкернĕ: *Абрамов В.* Натурализм, вилĕм, фэнтези, е Мĕнпе сывлать литература? // Тăван Атăл. 2005. 11 №. 57—61 с.

11 *Гордеев Д.* Çаваллă карчăкпа шăпасăр ача (Г. Федоровăн «Ĕмĕр чиккисен ани...» статйине сӳтсе яватпăр) // Тăван Атăл. 2005. 9 №. 70 с.

12 *Гордеев Д.* Хуп хушшинчи çылăх. Повеçпе роман. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. 5—96 с.

13 Асăннă кĕнекерех пичетленнĕ. 96—365 с.

[14] *Гордеев Д.* Ҫаваллă карчăкпа шăпасăр ача // Тăван Атăл. 2005. 9 №. 70 с.

[15] *Павлов С.* Сĕлкĕш: 1990—2003. Роман. 1—4 кĕнекесем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. 414 с.

[16] *Павлов С.* Тан таппи: Роман, повесть, калавсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. 3—249 с.

[17] *Сунтал М.* Тăкать тĕнче ҫут кулă // Тăван Атăл. 2003. 10 №. 46 с.

[18] Ку сыпăк — Ларра ҫинчен хывнă легендăран. Ларра ят «отверженный, выкинутый вон» тенине пĕлтерет. Кун пирки ҫак кĕнекере вулама пулать: *Горький А.М.* Рассказы. Очерки. Воспоминания. Пьесы. М.: Худ. лит., 1975. С. 41—57.

[19] *Мышкина А.* Атте пилĕ: Повеҫсемпе калавсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. 159 с.

[20] *Никифорова В.В.* Хальхи чăваш прозинчи ҫĕнĕ пулăмсем (1995—2000) // Фольклорное и литературное отражение художественно-эстетической памяти народа. Сборник статей по материалам научно-практических конференций. Чебоксары: ЧГИГН, 2006. С. 125—154.

[21] Радиопа 1968 ҫулта тухса калаҫнинчен // ЧПГĂИ. 5 уйр. 900 упр. ед. 5259 №. 55 с.

[22] *Петров В.* Венчет ҫĕрри. Повеҫсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. — 303 с.

[23] Г.И. Федоров пултарулăхне, вăл шутра ҫак тапхăртине те, уйрăм статьясенче тишкернĕ: *Никифорова В.В.*: 1) Хальхи чăваш прозинчи ҫĕнĕ пулăмсем (1995—2000) // Фольклорное и литературное отражение художественно-эстетической памяти народа. Сборник статей по материалам научно-практических конференций. Чебоксары: ЧГИГН, 2006. С. 127—133; 2) Интеллектуальная проза в чувашской литературе: поэтика творчества Г. Федорова // Чувашский гуманитарный вестник. 2009. № 5. С. 124—139. Ҫак сăлтава пула ку статьяра ун пирки чарăнса тăмастпăр.

24 *Таллеров Л.* Шеремет. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2003. 398 с.

25 *Артемьев Ю*. Самана чăтлăхĕнче пытарăннă чăнлăх // Хыпар. 2009. Кăрлач, 27.

26 *Федоров Г.* 12:09 12:09 Ĕмĕр чиккисен ани: çутă кун-ши е тĕттĕм каç? // Тăван Атăл. 2005. 8 №. 64 с.

27 Иккĕмĕш кĕнеки — «Вут-тăвăллă çулсем». Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. 238 с.

28 *Ыхра А.* Пăлхар çийĕн вĕршĕнсем хĕвĕшеççĕ. Кӳкеç, 2000. 144 с.

2009 ç.